# Аслă ÿсĕмрисен Спартакиадинче

Йĕпреçри сывлăхпа спорт комплексĕнче Пенсионерсен пĕрлĕхĕн регионти уйрăмĕ, спортпа туризм министерстви тата "Урожай" ирĕклĕ общество йĕркеленипе аслă ÿсĕмри çынсем хушшинче республикăри иккĕмĕш спартакиада иртрĕ. Ăмăртусене савăнăçлă лару-тăрура уçнă çĕре спортпа туризм министрĕ С.Мельников хутшăнчĕ.

–Пурнăçра хастар пулнăшăн ман сире тав сăмахĕ калас килет. Эсир сывă пурнăç йĕркине сараканسем пулса тăратăр. Çамрăксем курччăр эсир мĕнле хастар кăмăл-туйăмлă, йăрăс та тăпалкка пулнине, сирĕнтен тĕслĕх илччĕр, – тенĕ министр. Спартакиадăна хутшăнакансене çавăн пекех Йĕпреç район администрацийĕн ертÿçи Н.Чугаров, Пенсионерсен пĕрлĕхĕн регионти уйрăмĕн ертÿçи В.Сапожников, Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ В.Николаев саламласа ăнăçусем суннă.

Ăмăртусене хуласемпе районсен 25 команди хутшăннă /пурĕ 225 çын/. Бассейнра ишессипе, çăмăл атлетикăра, сĕтел çи теннисра, тĕл перессипе, шахматла выляссипе, хутăш эстафетăра, аэробикăра тупăшнă аслă ÿсĕмри çынсем. Район команди 16-мĕш вырăн йышăннă.

Район чысне шахматла выляса Елена Фоминапа /Нÿшкасси/ Тăвайри газ участокĕн начальникĕ Владимир Семенов хÿтĕленĕ. Швейцаркăпа 5 тур вылянă. 5-шер очко илме май пур çĕртен пĕрремĕшĕ 4, иккĕмĕшĕ 3,5 очко пухнă. 2–3 вырăнсене пайлакан çĕншупашкарсемпе сĕнтĕрвăррисенчен çур очко кăна юлнă пирĕн шахматистсем /4-мĕш вырăн/. Пĕрремĕш вырăнта вара – шупашкарсем /9 очко/.

Раççей пенсионерĕсен I Спартакиади кăçал июнĕн 10–12-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче иртет. Йĕпреçри ăмăртусем шăпах ăна хатĕрленмелли, республикăн пĕрлештерĕ командине йĕркелемелли тапхăр шутланаççĕ.

**Р.ГУРИНА,**
**ветерансен районти канашĕн председателĕ.**

<u>ТĔРЛĔРЕН</u>

## Владимир Путин ĕçлĕ визитпа – Китайра

РФ Президенчĕ Владимир Путин ĕçлĕ визитпа Китай Халăх Республикине кайнă. Икĕ çĕр-шыв ертÿçисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес пирки тунă нумай килĕшÿ айне алă пуснă, тĕнчери лару-тăрăва сÿтсе явнă.

## Республика Пуçлăхĕ – Мускаври канашлура

Кĕçнерни кун Республика Пуçлăхĕ Михаил Васильевич Игнатьев Мускавра иртекен ларăва хутшăннă. Раççей Правительствин Председателĕ Дмитрий Анатольевич Медведев ирттернĕ ăна. Унта çĕр-шыври вĕрентÿ системи 2014 çулта пĕрлехи патшалăх экзаменне ирттерме мĕнле хатĕрленсе çитнине сÿтсе яваççĕ. Канашлура Раççей Правительствин Председателĕн çумĕ Ольга Голодец, наукăпа вĕрентÿ министрĕ Дмитрий Ливанов, вĕрентÿ тата наука сферинчи надзор ĕçĕсен федераллă служба ертÿçи Сергей Кравцов, федераци субъекчĕсен пуçлăхĕсем пулаççĕ.

**/Хамăр инф./.**

## Шупашкарта – Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль

Çак эрнере Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери VII кинофестиваль уçăлчĕ. Вăл 1 эрнене пырать. Куракансем тÿлевсĕрех çĕнĕ фильмсем пăхма, курав-презентацисемпе паллашма, паллă артистсемпе тĕл пулма пултараççĕ. Пĕчĕк йышлă халăхсен кинематографне халалланă фестиваль программинче чăваш фильмĕсем те пур.

## Пуçласа иртет

Çу уйăхĕн 23–24-мĕшĕсенче Шупашкарта пуçласа Пĕтĕм Раççейри хор фестивалĕ иртет. Мероприятие Культура çулталăкне тата Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул çитнине уявлама хатĕрленнипе çыхăнтарнă.

## Уява хатĕрленсе

Иртнĕ çул тăвайсем июнĕн 24-мĕшĕнче Республика кунне анлăн паллă тунăччĕ. Кăçал уявăн анлă мероприятийĕсем Комсомольски районĕнче те иртеççĕ. Кунта уява хатĕрленсе çул-йĕрсене юсаççĕ, тавралăха тирпей-илем кĕртеççĕ тата ытти те.

Çак кунсенче организацисемпе предприятисем умне, район центрĕнчи клумбăсене илемлĕ чечексем лартнă. Район администрацийĕн, Комсомольски ял тăрăхĕн специалисчĕсем, "Торговый дом" ООО ĕçченĕсем тата ыттисем те çак ĕçе хастар хутшăннă.

**А.ЕФРЕМОВА.**

<u>01 АСĂРХАТТАРАТЬ</u>

# Вăрмансенчи пушарсенчен сыхланар

"ЧР территорийĕнчи вăрман фончĕн çĕрĕсем çинчи вăрмансене граждансем кĕрессине чакарасси çинчен" экологипе çут çанталăк ресурсĕсен министерствин приказне пирĕн районта та пурнăçа кĕртессишĕн тимлеççĕ. Питĕ шăрăх тăнипе вăрмансенче пушар тухас хăрушлăх пулса тăнă. Çавăнпа çынсен ку енĕпе тимлĕ пулмалла. Пирĕн районта çут çанталăкри вут-кăвар ан алхастăр тесе тăрăшакан комисси туса хунă. Тăвай ялĕнчи 45-мĕш пушар чаçĕн ертÿçи Н.Г.Павлов, надзор ĕçĕсен районти уйрăмĕн тата ятарлă программăсен секторĕн начальникĕсем В.М.Михайловпа В.В.Исаев, Канаш лесничествинчи вăрман мастерĕ Г.А.Шакртов кĕреççĕ унта. Çÿреме юраманнине палăртса çул урлă хывнă каштасене, шыв илмелли вырăнсене тата ыттине тĕрĕслеççĕ вĕсем.

Çут çанталăк пушарĕсем тухассин тĕп сăлтавсенчен пĕри – вăрмансенче çÿренĕ чухне вут-кăвар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнманни, типĕ курăксене çунтарнă чухне "хĕрлĕ автан" вăрмана кĕрсе кайни.

Раççей МЧСĕн ЧР Тĕп управленийĕн районти надзор ĕçĕсен уйрăмĕ Тăвай ен çыннисене пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене çирĕп пăхăнма ыйтать. Вăрманта кăвайт ан чĕртĕр, пирус тĕпне тата шăрпăка сÿнтермесĕр ан пăрахăр.

**В.МИХАЙЛОВ,**
**надзор ĕçĕсен районти уйрăмĕн начальникĕ.**

## Тарăн тымар ан ятăр

"Хăрушлăхсăр Тăван çĕр-шыв" общество организацийĕн 2013 çулхи кăтартăвĕсем тăрăх патшалăх валли тĕрлĕ тавар сутăн илмелли, пулăшу ĕçĕсем пурнăçламалли сферăра регионсенче коррупци мĕнлерех вăй илнин рейтингне хатĕрленĕ. Чăваш Ен 83 регион хушшинче 73-мĕш вырăн йышăннă.

Тишкерĕ кăтартусене тĕпе хурас-тăк – республикăра пĕлтĕр асăннă тĕллевсемпе 1879 пин суту-илÿ ирттернĕ – пĕтĕмпе 37 млрд. ытла тенкĕлĕх. Вĕсем тĕлĕшпе сăлтавлă 92 çăхав пулнă, 47 тĕслĕхре контракт тăвассине хирĕçленĕ.

Рейтингăн ытти пĕтĕмлетĕвне илес тĕк – коррупци асăннă сферăра уйрăмах тарăн тымар янă регионсен шутĕнче Чечен Республикине, Чукотка автономи округне, Дагестан Республикине палăртнă. Ку енĕпе "таса" регионсем – Брянск облаçĕ, Удмурти тата Тутарстан. Вĕсем 83–81-мĕш вырăнсенче.

Сăн ÿкерчĕкре эсир районти тĕп библиотекăра ĕçлекен Людмила Даниловна Шупашкарта ентешлĕх уявĕнче вырăнти ал ĕç ăстисен куравĕпе паллаштарнă вăхăтра куратăр. Людмила Николаевна хăй те пултарулла, тĕрлеме юратаканскер, тĕрлĕ выставкăсене хутшăнать. 1986 çултанпа тăрăшать культура сферинче. Чăваш хĕрарăмĕн пĕтĕм илемĕ пур тейĕн унра – ĕçчен, таса кăмăл-сипетлĕ, сăпайлă. Хастарлăхне кура ăна территорири суйлав комиссийĕн председателĕн заместителĕ пулма шаннă.

**А.НИКИТИНА сăн ÿкерчĕкĕ.**

## Тĕл пулу пулчĕ

Çак кунсенче "Ял ĕçченĕ" хаçат редакцине Красноармейски районĕнчи хаçатçăсем /Надежда Козлова делопроизводитель тата корректор, электронлă набор тата пичет кăларăмне верстка тăвакан пайăн операторĕсем – Марина Соленовапа Галина Михайлова/ килсе кайрĕç.

Малтан Л.Якку тĕп редактор коллектив ĕçĕпе кĕскен паллаштарчĕ. Журналистсем паянхи тĕллевĕсене тивĕçлĕ шайра туса пыма тăрăшни пирки каларĕ.

Тăвай енри пичет работникĕсем мĕнле ĕçленипе кăсăкланчĕç хăнасем. Электронлă набор тата пичет кăларăмне верстка тăвакан пай мĕнле ĕçленине тĕпчерĕç. Сăн ÿкерчĕксене пичете хатĕрлес, тĕрлĕ шрифтсемпе усă курас, сайт çине чăвашла статьясем лартас, PDF–файл тăвас тата ытти тĕллевсем пирки тĕплĕн ăнлантарчĕ В.Никитин пай редакторĕ. Красноармейски районĕнчен килнисем хăйсем патне те пырса курма сĕнчĕç.

**А.АЛЕКСАНДРОВА.**

## Микроçырав йĕркелесшĕн

Патшалăх статистикин Федераллă служби 2015 çулхи октябрьте РФ субъекчĕсенче халăхăн микроçыравне ирттересшĕн. Ун вăхăтĕнче харпăр хăй кил хуçалăхĕпе пурăнакан 2,8 миллиона яхăн çынран хăш-пĕр ыйтусем тăрăх хуравсем илесшĕн.

## "Туриада–2014" пырать

Майăн 21-мĕшĕнче "Хвалынский" сăрт-ту йĕлтĕр курорчĕн /Саратов обл./ территорийĕнче Атăлçи федераллă округри "Туриада–2014" спортпа туризм лагерĕ уçăлчĕ. РФн 14 субъектĕнчен 600 ытла спортсмен хутшăнать унта, çав шутра – Чăваш Енĕн команди те. Программăра спорт туризмĕн ăмăртăвĕсем, конкурссемпе экскурсисем, мастер-классем, спорт ăмăртăвĕсем, авиамоделистсем кăтартакан "Сывлăшри çапăçу" шоу. Лагерь майăн 24-мĕшĕччен ĕçлет.